26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАРТ
1
ЮНКУН
43(6538) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВӐРЛӐХ—КОЛХОЗӐН ЫЛТТАН ФОНҪӖ

Халӗ чи пысӑк та ответлӑ ӗҫсенчен пӗри вӑл — ҫителӗклӗ таран вӑрлӑх фонҫӗ хывасси пулса тӑрать. Ҫуракине темӗнле лайӑх хатӗрленсен те, вӑрлӑхсӑр нимӗн те тума ҫук. Вӑрлӑх — колхозӑн ылттӑн фонҫӗ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, халӗ республикӑра фронтовой уйӑхлӑх пырать. Уйӑхлӑха ирттерес тӗлӗшпе йышӑннӑ постановленипе парти Обкомӗ райкомсене уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче вӑрлӑх фонҫӗсене кашни колхозрах хывса ҫитермелле тума, ку ӗҫре колхозсем пӗр-пӗрне пулӑшассине тата вӑрлӑхсене колхозниксенчен пухассине организацилеме хушрӗ. Ҫак уйӑхлӑхра пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем мӗнле ӗҫленинчен тата ҫак ӗҫе районсен руководителӗсем мӗнле ертсе пынинчен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ килет.

Вӑрлӑх фондне хывас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлемелли ҫинчен кӑтартса панине чылай районсенчи колхоз правленийӗсем, районсен руководителӗсем тӗрӗс ӑнланса илнӗ, ку тӗлӗшпе паха ӗҫ пуҫарса, ӑна ӑнӑҫлӑн сарса пыраҫҫӗ. Ӗҫпир нумаях пулмасть, Комсомольски районри «Трактор» колхозпа унӑн председателӗ Иванова юлташ пуҫарнӑ паха ӗҫ ҫинчен ҫырнӑччӗ. Иванова юлташ хӑй тырринчен вӑрлӑх фондне 27 пӑт, колхоз членӗсем: Павлова—10 пӑт, Николаев—10 пӑт, Яковлев—12 пӑт параҫҫӗ. Ку колхоз вӑрлӑх ҫитмен колхозсене пӗтӗмпе 250 пӑт вӑрлӑх парса пулӑшать. Ҫак пуҫарӑва нумай колхозниксем йышӑнса илчӗҫ. Шупашкар районӗнчи «Урожай» колхоз членӗ В. Е. Егоров юлташ вӑрлӑх ҫитмен колхозсене хӑй тырринчен 132 пӑт парса пулӑшать, Советски районри «Электросвет» колхоз членӗ Мурзин юлташ—35 пӑт, Ишлей районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан колхоз членӗ Осипов юлташ 15 пӑт параҫҫӗ.

Элӗк районӗнчи «Труд» тата «Шуҫӑм» колхозсен вӑрлӑх ҫитменнине кура, ҫав колхозсен членӗсем, хӑйсен тыррисене парса, кӗске вӑхӑт хушшинчех вӑрлӑх фондне ҫителӗклӗ таран хывнӑ. Первомайски районри «Большевик» колхоз членӗсем вӑрлӑх ҫитмен колхозсене 120 пӑт тӗштырӑ, «Парижская Коммуна» колхоз членӗсем 90 пӑт пама йышӑннӑ. Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз юнашарти вӑрлӑх ҫитмен колхозсене 500 пӑт парса пулӑшать. Ҫӗмӗрле районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз кӳршӗри вӑрлӑх ҫитмен колхоза 120 пӑт сӑрхи тулӑ вӑрлӑхӗ парать. Октябрьски районри «Осоавиахим» колхоза «Социализм» тата «Заря» колхозсем 15-шер центнер каялла тавармалла параҫҫӗ. Ҫакӑн пек пархатарлӑ тӗслӗхсем татах та нумай илсе кӑтартма пулать. Вӑрлӑхлӑх тырра государствӑран илессине шанса тӑма кирлӗ мар, пӗр колхоз тепӗр колхоза пулӑшассине, колхозниксенчен каялла таварса памалла тырӑ пухассине вырӑнта халех организацилемелле.

Анчах та нумай районсенче колхозсемпе колхозниксен ҫак патриотизмлӑ паха пуҫарӑвне анлӑн сарса яни курӑнмасть-ха.

Акӑ Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Кувакино, Пӑрачкав районӗсенех илер. Кунта чылай колхозсен вӑрлӑхсем ҫитмеҫҫӗ. Апла пулсан та ҫав районсен руководителӗсем вӑрлӑх фондне хывса ҫитерес тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ. Шӑмӑршӑ районӗнче хӑшпӗр колхозсенче ытлашши вӑрлӑх пур, анчах кунти ҫаврӑнӑҫусӑр руководительсем вӑрлӑх пухас ӗҫе организацилемен.

Вӑрлӑх хывас ӗҫ—паян тумалли ӗҫ. Ялсоветсемпе колхозсен председателӗсем тата районсен руководителӗсем ҫак ответлӑ та пысӑк ӗҫе большевикла организацилеме, ӑна куллен ертсе пыма тивӗҫлӗ. Партипе комсомол организацийӗсен хальхи вӑхӑтра вӑрлӑх хывас ӗҫ тавра массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе анлӑн сармалла, ҫак ӗҫе пурнӑҫа кӗртме мӗнпур колхозниксене мобилизацилемелле.

Колхозниксем хӑйсен тыррисенчен колхозӑн вӑрлӑх фондне хывни—Хӗрлӗ Ҫара пулӑшни пулать. Колхозсен вӑрлӑх фондне тырӑ паракан колхозниксемпе колхозницӑсен паха та пархатарлӑ пуҫарӑвне анлӑн сарса пырар!

Атӑл лешьенчи электростанци ток пачӗ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарьне
И. М. ЧАРЫКОВ юлташа.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн председательне
А. М. МАТВЕЕВ юлташа.

Атӑл лешьенчи электростанцие тӑвакансен коллективӗ, Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсемпе хавхаланса тата Сталин юлташ фронта пур енчен те пулӑшса тӑма кирли ҫинчен кӑтартса панине асра тытса, хӗрӳ ӗҫре станцие туса пӗтерчӗ. Февралӗн 28-мӗшӗнче, 20 сехет те 25 минутӑра, станци Шупашкар хулинчи промышленноҫа пӗрремӗш ток пачӗ.

Тунӑ ҫитӗнӳпе лӑпланса лармасӑр, коллектив станцин пӗтӗм хӑватне алла илессишӗн ӑна тӗрӗс те пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттерессишӗн малалла кӗрешет.

Станци строительствин начальникӗ **БОРОДИН**.
Партбюро секретарӗ **РОМАНОВ**.
Постройком председателӗ **ПИКЕРМАН**.

Атӑл лешьенчи электростанци строительствин начальникне
БОРОДИН юлташа.
Партбюро секретарьне **РОМАНОВ** юлташа.
Постройком председательне **ПИКЕРМАН** юлташа.

ВКП(б) Обкомӗпе Чӑваш АССР Совнаркомӗ строительствӑри рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата руководительсене Атӑл лешьенчи электростанцие туса ҫитернӗ ятпа ырӑ сунса саламлаҫҫӗ. Ку станцие ӗҫе яни Чӑваш республикин столицинчи промышленность предприятийӗсене электроэнерги парса тӑрас ӗҫре ҫав тери пысӑк вырӑн йышӑнать.

Парти Обкомӗпе республика Совнаркомӗ ҫакна шанса тӑраҫҫӗ: строительство коллективӗ тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармӗ, станцин пӗтӗм хӑватне алла илес тата ӑна тӗрӗс те пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттермелле тӑвас тесе, кирлӗ мерӑсене пурне те йышӑнӗ.

ВКП(б) ОБКОМЕ, ЧӐВАШ АССР СОВНАРКОМЕ.

Уйрӑм тата коллективлӑ пахча-ҫимӗҫ ӗҫне 1944 ҫулта тата ытларах сарасси

ССР Союзӗн Совнаркомӗ облаҫсемпе крайсен исполкомӗсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене 1944-мӗш ҫулта уйрӑм тата коллективлӑ пахчасен лаптӑкӗсене иртнӗ ҫулхинчен 20 процентран кая мар ӳстерме хушнӑ. Рабочисемпе служащисене тата фронтовиксен ҫемьисене пахча ӗҫӗсене тата ытларах явӑҫтармалла, ҫак ӗҫе тума профсоюз организацийӗсен пулӑшмалла. Уйрӑм тата коллективлӑ пахча ӗҫне фашистла нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенче уйрӑмах анлӑн сарса ямалла.

Хуласен, поселоксен тата государство фонҫӗн пушӑ выртакан ҫӗрӗсене рабочисемпе служащисен уйрӑм тата коллективлӑ пахчисем валли 5—7 ҫула пама хушнӑ. Пахчасем валли ҫывӑхри совхозсен пушӑ выртакан ҫӗрӗсене, чугун ҫул ҫумӗнчи ҫӗрсене тата, колхозсемпе калаҫса, вӗсен хӑйсем усӑ курман ҫӗрӗсене те уйӑрса памалла. Ялсем ҫывӑхӗнчи чи лайӑх участоксенче чи малтан ҫар ҫыннисен ҫемьисене тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене уйӑрса памалла. Уйрӑм тата коллективлӑ пахчасене ҫӗр апрелӗн 1-мӗшӗччен уйӑрса памалла. Совхозсемпе колхозсен 1943 ҫулта предприятисемпе учрежденисене уйӑрса панӑ ҫӗрӗсем 1944 ҫулта та ҫав предприятисемпе учрежденисен аллинчех юлаҫҫӗ.

Облаҫсемпе крайсен исполкомӗсен тата республикӑсен Совнаркомӗсен, профсоюзсемпе тата ҫӗрӗҫ органӗсемпе пӗрле ӗҫлесе, уйрӑм тата коллективлӑ пахчасем тунӑ рабочисемпе служащисем хушшинче агротехникӑллӑ пропагандӑна анлӑн сарса ямалла. Иртнӗ ҫул пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ тата ҫӗрулми туса илнӗ пахчаҫӑсен опытне анлӑн сармалла. Рабочисемпе служащисен хӑйсен пахчисем валли ҫителӗклӗ таран вӑрлӑх хатӗрлемелле. (ТАСС).

Ҫуракине хатӗрленсе ҫитмелли фронтовой уйӑхлӑх

Малта пыракан колхозниксемпе колхозницӑсем, хӑйсен тыррисене вӑрлӑх фондне хывса, колхозсене пулӑшаҫҫӗ. Ҫулӑмлӑ патриотсен паха пуҫарӑвне анлӑн сарар!

Колхозсен вӑрлӑх фондне

Колхозсен вӑрлӑх фондне ҫак колхозниксем—тӑван ҫӗршывӑн ҫулӑмлӑ патриочӗсем хӑйсен тыррисене хывнӑ:

Т. ИВАНОВА—Комсомольски районри «Трактор» колхоз председателӗ—27 пӑт.

НИКОЛАЕВ—ҫав колхозри ферма заведующийӗ — 10 пӑт.

И. ЯКОВЛЕВ—ҫав колхозри колхозник—12 пӑт.

Е. ПАВЛОВА—ҫав колхозри бригадир — 10 пӑт.

ОСИПОВ — Ишлей районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан колхоз членӗ—15 пӑт.

МУРЗИН — Советски районри «Электросвет» колхоз членӗ — 35 пӑт.

В. Е. ЕГОРОВ—Шупашкар районӗнчи «Урожай» колхоз членӗ—132 пӑт.

Колхозсем пӗр-пӗрне вӑрлӑх туянма пулӑшаҫҫӗ

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Социализм» тата «Заря» колхозсем «Осоавиахим» колхоза 15-шер центнер вӑрлӑхлӑх тырӑ панӑ. «Красное Сормово» колхозра кантӑр вӑрри ҫитмен, колхозниксем вӑрлӑхлӑх хӑйсем хушшинче пухса колхоза панӑ.

ҪӖМӖРЛЕ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз кӳршӗри вӑрлӑх ҫитмен колхозсене 20 центнер тулӑ парать.

ПЕРВОМАЙСКИ. «Липовка» колхоз районри «Малиновка», Мичурин тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсене 43 центнер йӗтӗн вӑрри панӑ. «Красная Поляна» колхоз вӑрлӑх ҫитмен колхозсене пулӑшма 10 центнер вика тата 2 центнер йӗтӗн вӑрлӑхӗ панӑ. «Красный луч» колхоз Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоза 20 центнер вир вӑрлӑхӗ панӑ. Районри колхозсенче пӗр-пӗрне вӑрлӑх туянма пулӑшасси анлӑн сарӑлса пырать.

Вырӑнти удобренисене пухатпӑр

ШАХАСАН. Тури Сурӑмри «Заря» колхозра ҫак уйӑхра кӑна 32 центнер кӗл, 20 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 26 центнер фекали пухнӑ, уя 250 лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Удобренисем пухас тӗлӗшпе вӑрҫӑ инвалидӗ П. Дмитриев ертсе пыракан 1-мӗш бригада малта пырать.

С. АСЛАН.

Ҫураки шӑмӑршӑсене кӗтмест

ШАМАРША. (Телефонпа). Районри колхозсем ҫулран ҫул тухӑҫсӑр тырпул туса илни, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси япӑхса кайни, государство умӗнчи парӑм ӳссе пыни кунти руководительсене пӑшӑрхантармасть иккен.

Иртнӗ ҫул районӗпе гектартан вӑтам шутпа 55—60 пӑт тӗштырӑ пухса илни тата государство умӗнчи обязательствӑсене 72,3 процент кӑна пурнӑҫлани мӗнрен килнине ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Вислобоковпа райсовет исполкомӗн председателӗ Михеев юлташсем, ҫавӑн пекех тата колхоз руководителӗсем те аван пӗлеҫҫӗ.

Анчах ҫуракине хатӗрленес ӗҫре кая юлса пынине пӗтерес тесе никам та ҫине тӑрса ӗҫлемест-ха.

Фронтовой уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа 5 кун иртрӗ, анчах уйӑхлӑх ҫинчен кунта ӗнерччен нумай колхоз председателӗсем пӗлмен. Февралӗн 27-мӗшӗнче колхозсемпе ялсовет председателӗсен тата ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ.

Канашлура тӑванла республикӑсен ӑмӑртӑвӗнче Чӑваш республики илнӗ обязательствӑсене, комсомолецсен вырӑнти удобренисем пухмалли уйӑхлӑхӗ ҫинчен тата ҫуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитмелли фронтовой уйӑхлӑх ҫинчен сӳтсе-явма шутланӑ. Канашлӑва делегатсем 35 колхозран килес вырӑнне пурӗ те 8 колхозран кӑна килнӗ. Ҫапла вара паянхи куна ҫитсе те нумай колхозсенче фронтовой уйӑхлӑх ҫинчен пӗлмеҫҫӗ.

Ҫуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитмелли фронтовой уйӑхлӑх Шӑмӑршӑ районӗшӗн уйрӑмах ответлӑ та пысӑк вырӑн йышӑнмалла, мӗншӗн тесен районӑн туса ҫитермен ӗҫсем питӗ нумай.

Паянхи кун тӗлне районӗпе 7000 центнер вӑрлӑх ҫитмест, лашасен сахал йышӗ кӑна ӗҫе юрӑхлӑ, МТС 34 трактортан 25-шне кӑна юсанӑ, анчах районри комисси вӗсенчен пӗр тракторне те йышӑнман. Ҫураки валли пурӗ те 11 тонна кӑна горючи илсе килнӗ, газогенераторлӑ тракторсем валли чурккӑсем 25 процент ҫеҫ хатӗрленӗ.

Ӗҫ ҫакӑн пек япӑх тӑни район руководителӗсене ҫуракине хатӗрленес ӗҫре пӗтӗм района ура ҫине тӑратма хушать. Анчах та кунта, ҫӗрӗҫпай пуҫлӑхӗсӗр, МТС директорӗпе уйрӑм колхоз председателӗсемсӗр пуҫне, ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе никам та ӗҫлемест. Район руководителӗсем ытларах кабинетра ларма юрататҫӗ.

ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ колхозсем ҫумне хӑйсен уполномоченнӑйӗсене «ҫирӗплетнӗ», анчах вӗсенчен нумайӗшӗ колхозсенче 1,5—2 уйӑх хушши пулман.

Уйрӑм колхоз председателӗсен кая юлнӑ шухӑшсемпе пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем вӑрлӑх ҫитмест шутласан та, тупас тӗлӗшпе нимӗн те шутламаҫҫӗ. «Пламя труда», «Кӑҫал юл», «Искра» колхозсем пурӗ те 25—30-шар процент кӑна вӑрлӑх хывнӑ.

«Искра» колхоз председателӗ Лысов юлташ лӑпкӑ шухӑшпа пурӑнать. Колхозӑн вӑрлӑх ҫитмест, пурринчен те тасатса хуман, анчах Лысов ликенсе ӗҫлес вырӑнне ҫӑра куркинчен хӑпаймасть, пӗр кунӗнче ӑна ялсоветне темиҫе хут чӗнтерчӗҫ пулсан та, вӑл унта пыма вӑхӑт тупаймарӗ.

Хывнӑ вӑрлӑхсене сыхлас ӗҫе организацилемен, вӑрлакансене ҫийӗнчех ответ тыттармаҫҫӗ.

Комсомольски районри «Трактор» колхоз членӗсен пуҫарӑвӗ ҫинчен те кунта сӳтсе-явман. Вӑрлӑх ҫитмен колхозсем валли вӑрлӑх ытлашши пур колхозсенчен кивҫен илесси тата колхоз членӗсенчен пухасси ҫинчен шутламаҫҫӗ те. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозӑн (председателӗ Чибуков юлташ) вӑрлӑх 60 центнер ытлашши пур, анчах та ӑна пытарса усранӑ.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫри ҫак чӑрмавсене халех сирмесен, район татах та йывӑртарах условисене кӗрсе ӳкесси курӑнсах тӑрать.

ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗн районри активра ҫуракине хатӗрленес ӗҫе халех хускатас шутпа колхозсене ямалла, ҫак ӗҫе колхозниксемпе колхозницӑсен анлӑ массине мобилизацилемелле.

П. НИКОЛАЕВ,
(Хамӑр ятарласа янӑ корреспондент).

Хурӑнсурсем ҫуракине хатӗр

ВАРНАР. (Хамӑр корр.). Хурӑнсурти Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз иртнӗ ҫул вӑтам шутпа гектартан 100—105 пӑт тӗштырӑ туса илнӗ. Уйрӑмах кунта махорка тухӑҫлӑ пулнӑ: ӑна кашни гектартан 16-шар центнер пухнӑ. Кӑҫалхи ҫул татах та тухӑҫларах тырпул туса илес тесе, колхозниксем пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ. Колхозӑн ҫуракинче 362,5 гектар акса хӑвармалла. Ӑна валли 596 центнер вӑрлӑх хатӗрлесе хунӑ. Вӗсен шӑтас пахалӑхӗ ҫапла: сӗлӗ—99,6 процент, пӑрҫа—98,8 процент, ҫурхи тулӑ—98,2 процент, урпа—98,9 процент, кантӑр вӑрри—90,1 процент шӑтать.

Ҫуракинче колхоза 24 плуг кирлӗ пулсан, 36 плуг пур. Вӗсене пурне те лайӑх юсанӑ. Колхоз тимӗрҫи Ф. Васильев ялхуҫалӑх машинисемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене те тӗплӗн юсаса хучӗ.

Ҫуракине хатӗрленнӗ май ҫавӑн пекех 42 урапа хатӗрленӗ, вӗсенчен 9-шне ҫӗнӗрен тунӑ. Ҫавӑн пекех колхоз ҫӗнӗрен 26 михӗ, 87 хӑмӑт, 86 ӗнерчӗк, 120 ытла ака пӑявӗсем туса хатӗрленӗ.

Колхоз хӗллехи агротехника ӗҫӗсене тӗплӗн пурнӑҫа кӗртсе пырать: 76 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ, уя 4895 лав тислӗк кӑларнӑ, 203 центнер кӗл, 69 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, 50 центнер фосфорит ҫӑнӑхӗ кӳрсе килнӗ. Колхозри агротехник Шлыков юлташ агрокружок ӗҫне аван ертсе пырать. Кӑҫал агрокружокран 45 ҫынна вӗрентсе кӑларнӑ, вӗсенчен 3 яровизатор, 24 сухаҫӑ, ыттисем акакансем. Халӗ тата 45 ҫын вӗренет.

В. ВЕСЕЛОВ.

Гектартан ҫӗр пӑт тырӑ туса илессишӗн

ПЕПРЕҪ. «Красный партизан» колхоз паянхи куна уя 3055 лав тислӗк кӑларнӑ, 39 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 61 центнер кӗл пухса хатӗрленӗ. Плугсемпе сӳресене, лаша таврашӗсене юсанӑ. Лашасем пурте вӑнтӑр. Лашасене ҫураки вӑхӑтӗнче ҫитерме кунне 2 килограмм сӗлӗ, ҫителӗклӗ таран утӑ уйӑрса хунӑ. Колхоз председателӗ ҫамрӑк коммунист Ефремов юлташ ҫуракине кӗске вӑхӑтра та лайӑх туса ирттерессишӗн, гектартан 100 пӑтран кая мар тырӑ туса илессишӗн колхозниксене кӗрешӳве мобилизацилет.

П. КУРАКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 28-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПСКОВ хули енче, наступлени вӑйлатса пырса, Ленинград облаҫӗнчи КАРАМЫШЕВО, СЛАВКОВИЧИ, ПОЖЕРЕВИЦЫ район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 450 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра—ЕГОРЬЕВЩИНА, ОЛЬГИНО ПОЛЕ, СКОМОРОХОВА ГОРА, ТОРОШИНО, БОЛЬШОЕ ЗАГОРЬЕ, ЮХНОВО-СОЛОДОВО, ВЫСТАВКА, СУМСКАЯ, КРЮКОВО, БОЛЬШИЕ ПЕТИ, МАЛЫЕ ПЕТИ, ЛЮТЫЕ БОЛОТА, ЗАРЕЧЬЕ, ПОДГОРЬЕ, ФИЛИСТОВО, ВЯЗОВИЦЫ, КУСТОВО, ОДОРЬЕ, ЦВЕНЬ, ВАРИТИНА ятлӑ пысӑк ялсем тата МОЛОДИ, ТОРОШИНО, ЛУНЕВО, ПОДСЕВЫ, ВЕШКИ, КАРАМЫШЕВО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—МИХАЛКИНО, ПОДЛУЖЬЕ, СЛОБОДА (НОВОРЖЕВ хулинчен 5 километр хӗвелтухӑҫнерехре), КЛИМОВО, ГРИВИНО, ВЕШЕЛИХА, БЕЛЬКОВО, ТУРОВСКИЕ ХОЛМЫ, ЗАХАРИНО, ЗАЛОЖЬЕ, ЗАПОЛЬЕ, СКОКОВО, ЧЕРНЕЦОВА, БОЛЬШИЕ БОТАЛКИ, МОЛЬГИНО, ВАСЬКОВО, СЕРГЕЙЦЕВО ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗнче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Февралӗн 27-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 21 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 9 самолетне персе ӳкернӗ.

* *

Псков хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени ҫаҫӗсем нимӗҫсене Торошино поселокӗпе чугун ҫул станцийӗнчен хӗссе кӑларнӑ. Торошино вӑл нимӗҫсен Псков хули патнелле илсе пыракан инҫетри ҫулсем ҫинчи тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑрать. Ҫав станцишӗн пынӑ ҫапӑҫура тӑшманӑн 700 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 7 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Тыткӑна нумай илнӗ. Пирӗн тепӗр соединени ҫаҫӗсем Ленинград облаҫӗнчи Карамышево тата Славковичи район центрӗсене туртса илнӗ, унта Череха шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑ каҫса кайнӑ. Нимӗҫсен ҫав шывӑн хӗвеланӑҫ енчи тӗреклетнӗ пункчӗсемшӗн пынӑ ҫапӑҫура гитлеровецсене пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем Ленинград облаҫӗнчи Пожеревицы район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 450 пункта ытла йышӑннӑ. Пӗр районра ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен совет ҫаҫӗсем тӑшманӑн каялла чакмалли ҫулӗсене татнӑ та халӗ нимӗҫсен каялла чакакан колоннисене аркатаҫҫӗ. 500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 26 тупӑ, 80 пулемет, 60 автомашина тата ҫар пурлӑхӗ турттарса пыракан пысӑк обоза тытса илнӗ.

Пирӗн авиаци нимӗҫ ҫарӗсен тылӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахса тата тупӑсемпе, пулеметсемпе персе, совет летчикӗсем икӗ чугун ҫул эшелонне сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн салтаксемпе ҫар хатӗрӗсем тиесе пыракан 170 автомашинине лавне пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 12 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Новосокольники хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Темиҫе кун хушшинчи ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн 3 дивизине поражени кӳнӗ. Совет ҫаҫӗсем, нимӗҫсене хӑваласа пырса, Бежаницыпа Новоржев хушшинчи шоссе тӑрӑх малалла вӑрҫаннӑ. Нимӗҫсем Льста шывӗ тӑрӑх пыракан хушӑри оборона позицийӗнче чарӑнса тӑма хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем Льста шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ та Новоржев хулинчен 5 километр хӗвелтухӑҫнерехре выртакан Слобода ялне туртса илнӗ. Совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан гитлеровецсем хӑйсен хӗҫпӑшалне, боеприпасне тата ытти вӑрҫӑ япалисене нумай пӑрахса хӑвараҫҫӗ. Пирӗннисем тыткӑна нумай илнӗ. Нимӗҫсем Германи каторгине хӑваласа пынӑ темиҫе пин мирлӗ совет ҫыннине пирӗн боецсем ирӗке кӑларнӑ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 9 самолетне персе ӳкернӗ тата аэродром ҫинче 32 самолета пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне, совет зенитчикӗсем нимӗҫсен 5 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Балтика тинӗсӗнче тӑшманӑн 5.000 тонна-таякан суднине шыва путарнӑ.

* * *

Пинск облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ нимӗҫсен гарнизонне тапӑннӑ та темиҫе вунӑ гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Совет патриочӗсем нимӗҫсем вырӑнти халӑхран ҫаратса пухнӑ 2.000 пӑт тӗштырра туртса илнӗ, унсӑр пуҫне тата 60 пичке горючи, винтовкӑсемпе боеприпассем нумай тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Нимӗҫсенчен туртса илнӗ тырра совет патриочӗсем вырӑнти халӑха валеҫсе панӑ. Ҫав Пинск облаҫӗнчи партизансен тепӗр отрячӗ нимӗҫсен ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ тата, противотанковӑй пӑшалсемпе персе, 8 паровоза юрӑхсӑра кӑларнӑ.

* * *

Фашистла нимӗҫ ҫарӗнчен салтаксем тарасси тата пораженилле шухӑш-кӑмӑлсем ӳсӗҫсемех ӳссе пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи декабрь уйӑхӗнче Струги Красные станци районӗнче гитлеровецсем хӑйсен 600 салтакне хӗҫпӑшалсӑрлантарнӑ. Ҫав салтаксем фронта кайма килӗшмен. Вара вӗсене концентрациллӗ лагере янӑ. Ҫавӑн пекех Псков хулинчи концентрациллӗ лагерьсемпе тӗрмесем йӑлтах тулса ларнӑ. Кӑҫалхи январӗн юлашки икӗ эрнинче (15-мӗшӗнчен пуҫласа 31-мӗшне ҫитиччен) Псков хулине Ленинград фронтӗнчи тӗрлӗ участоксенчен сӑнчӑрланӑ 1.200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне илсе пынӑ. Ку салтаксем нимӗҫсен тӗрлӗ чаҫӗсенчен. Ҫав салтаксене—вӗсем позицисене хӑйсен ирӗкӗпех, приказ памасӑрах пӑрахса хӑварнӑ тата хӑйсен хӗҫпӑшалне пӑрахнӑ тесе айӑплаҫҫӗ. Ҫавӑн пек концентрациллӗ лагерь тата Рига хулинчи латышсен 5-мӗш пехотнӑй полкӗн пулнӑ казармӗсенче вырнаҫнӑ.

* * *

Аялтарах фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсем Киев облаҫӗнчи Слобода ялӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Слободка ялӗнче пуҫпулса тӑнӑ хушӑра нимӗҫсем ялти халӑха йӑлтах ҫаратрӗҫ, пӗр айӑпсӑр ҫыннисене нумайӗшне асаплантарса вӗлерчӗҫ. Гитлеровецсем пуринчен те ытларах совет интеллигенцине кураймаҫҫӗ. Фашистла пуҫкасакансен аллинчен ҫак учительсемпе учительницӑсем пӗтрӗҫ: Григорий Качаенко, Виктор Гнатьев, Иван Курьян, Ольга Абрамова, Филипп Андрушенко, Федор Михайлов, Луния Скоба. Гитлер варварӗсем ялти больницӑна, электростанцие ишсе антарчӗҫ, пӗвене тата колхозӑн пулӑ ӗрчетмелли кӳллисене пӗтерсе тӑкрӗҫ, колхозӑн тем пек хитре паркне касса пӗтерчӗҫ. Нимӗҫсем пӗтӗм яла ҫаратса тухрӗҫ, вара, каялла чакма пуҫласан, колхозниксен ҫуртӗсене тата хуҫалӑх ҫурт-йӗрӗсене нумай ҫунтарса ячӗҫ».

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Киев хулинче ишĕлтерни тата тискер ĕçсем туни çинчен

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем Совет Союзĕнчи граждансене, колхозсене, общество организацийĕсене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтернинчен

Нимĕç захватчикĕсем Украина территорине кĕрсен, чи малтанах халăх пурлăхне тата мирлĕ çынсен пурлăхĕсене çаратма пуçланă.

Украинăра Гитлер лартнă рейхскомиссар Эрих Кох çапла çырнă: «Сăмах кунта чи малтан çакăн çинчен пырать: Германипе Европа кирек мĕнле вăраха тăсăлакан вăрçа та туса пыма пултарччăр тесен, çав çĕршыври чĕрчуньпа ... вăрсемпе апат-çимĕçсен питех те пысăк çăлкуçĕсене нимĕçсен çар хуçалăхĕпе нимĕç командованийĕ валли сыхласа хăварса вĕсемпе усă курмалла».

Çак çаратмалли плансене пурнăçа кĕртес тесе, нимĕçсем Украинăра чуралла-крепостникла йĕрке туса хума хăтланнă.

Германин Украинăри тыл çарĕсен командующийĕ авиаци генералĕ Китцингер 1942 çулхи юлĕн 18-мĕшĕнче кăларнă 1571/564/44 номерлĕ секретлă циркулярта çапла çырнă: «Украинец пирĕншĕн ют çын пулнă, малашне те ют çын пулса юлать. Украинецсемпе тата вĕсен культурăллă пурнăçĕпе пăртак интересленни те Германишĕн сиенлĕ, вăл Германие хăватлăхпа чаплăх кӳрекен чи паха паллăсене вăйсăрлатать».

Киевра фашистла юнлă бандитсен шайкки ĕçленĕ. Çав шайккăна генерал-комиссар Магуния, хула коменданчĕ генерал Эбергардт, СС-н аслă руководителĕ тата полицейфюрер Гальтерман, йĕрке полицийĕн генералĕ Шеер, оберштурмбаннфюрер Эрлингер, СА штадткомиссарĕ — бригаденфюрер Квитцрау ертсе пынă. Çав бандитсем ертсе пынипе Киев хулинчи халăха çаратнă, пĕтерсе пынă, çакăнпа пĕрлех Украина халăхне нимĕçе кăларас политикăна пурнăça кĕртсе пынă. Украина культурине пур майсемпе те пусарса, пĕтерсе пынă, совет çыннисене выçă пурăнса вилмелле туса хунă. Нумай магазинсемпе ресторансен стенисем çине: «Нимĕçсем валли çеç» тесе çырса çапнă. Украинăри Шевченко ячĕпе тăракан опера театрне, стадиона тата ытти общество учрежденийĕсене нимĕçсем çеç çӳреме пултарнă. Хула коменданчĕ генерал-майор Ремер 1942 çулхи августăн 6-мĕшĕнче кăларнă 184 номерлĕ приказра нимĕçсене стадионсемпе ресторансене «вырăнти çынсене» (украинецсене) чĕнме чарнă. Киеври историллĕ вырăна — Аскольд масарне оккупантсем нимĕç масарĕ туса хунă.

Хулари промышленноçа, транспорта, коммунальнăй хуçалăха ишĕлтерни тата халăха çаратни

Нимĕç оккупанчĕсем Киев хулинчи промышленность предприятийĕсен оборудованине çаратса Германие илсе кайнă, çав предприятисен çуртсене сирпĕнтерсе, çунтарса янă. Гитлеровецсем машинăсем тăвакан тата металл ĕçлекен заводсене — «Большевик», «Красный эксвакатор» заводсене ишсе пĕтернĕ, çав заводсем вĕсем промышленноçа, транспорта ялхуçалăхне машинăсем, инвентарь тата запаслă пайсем парса тăнă; оккупантсем Киев-Дарница хушшинчи чи пысăк чугун çул узелĕн çул хуçалăхне сирпĕнтерсе, çунтарса, ишсе пĕтернĕ; Совет влаçĕ вăхăтĕнче тунă пысăк фабрикăсене—пир-авăр фабрикине, ăрлакан-çыхакан фабрикăна, Горький ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрикине, атă-пушмак тăвакан, 1-мĕш, 4-мĕш, 8-мĕш фабрикăсене тата ыттисене те сирпĕнтерсе, çунтарса янă.

Фашистсем электростанцисемпе электросете, трамвайпа троллейбус паркĕсене, водопроводпа канализацие, çавăн пекех тата çăкăр пĕçерекен заводсемпе ытти предприятисене те сирпĕнтерсе, çунтарса янă, ишсе пĕтернĕ; чи пысăк хула халăхне çапла вара шывсăр, çăкăрсăр, хутмаллисĕр, çутăсăр тата куçса çӳремелли хатĕрсемсĕр тăратса хăварнă.

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Киевра хуçаланса пурăннă вăхăтра Киевăн тĕп урамне — Крещатика, çавăн пекех тата кӳршĕри урамсенчи — Прорезнăй, Институтски, Аслă Васильковски урамсенчи чи лайăх çуртсене сирпĕнтере-сирпĕнтере, çунтара-çунтара ярса пĕтерсе тăкнă. Вĕсем государствăпа общество учрежденийĕсен 940 çуртне ишĕлтернĕ, çав çуртсен пĕтĕм лаптăкĕ пĕр миллион тăваткал метр пулать. Çав çуртсем хушшинче УССР Верховный Совечĕн, Главнăй почтăн, «Континенталь» гостиницăн тата ыттисен çурчĕсене. 1.742 коммунальнăй çурта (вĕсен пурăнмалли лаптăкĕ пĕр миллион тăваткăл метр ытла пулать), уйрăм çынсен 3.600 çуртне (вĕсен пурăнмалли пĕтĕм лаптăкĕ 500.000 тăваткăл метра яхăн пулать) сирпĕнтерсе, çунтарса янă. Çавăн пек тискер ĕçсем тунине пула Киевра 200.000 çын ытла çуртйĕрсĕр тăрса юлнă. 1942 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче СС оберштурмбаннфюрерĕ Шпацель çакăн пек распоряжени пичетлесе кăларнă: «1942 çулхи августăн 12-мĕшĕнче империн руководителĕ кăтартса панă тăрăх, ылттăна, кĕмĕле тата çавăн пек ытти хаклă металлсемпе япаласене пĕтĕмпех, пĕр япала хăвармасăр, туртса илсе обергруппенфюрер Поль патне ямалла».

Гитлеровецсем хулари хăшпĕр районсене пĕтĕмпех «çапăçу пулакан зона» тесе пĕлтернĕ. Çынсене çав «зонăран» ирĕксĕр урăх çĕре куçарнă, çакна ăна иртĕнсе кайса çаратма май пултăр тесе тунă.

Заводсемпе фабрикăсем ĕçлеменпе пĕрех тăнă, культура тата наука учрежденийĕсене арпатса тăкнă. Наука тĕлĕшпе ĕçлекен нумай çынсене нимĕçсем, Германие илсе каяс сипе хăратса, сторожсем, кассирсем вырăнне ĕçлеттернĕ. Математикăна вĕрентекен профессор Крюковский шыв станцийĕнче кассир пулса ĕçленĕ, химие вĕрентекен доцент Страшкевич прачечнăй заведующийĕ пулса ĕçленĕ, доцент Печук сторож пулса ĕçленĕ.

Фашистла чура хуçисем темиçе çĕр пин совет граждание нимĕç каторгине хăваласа кайнă. «Нимĕç руководителĕсем тăрăшнине пула, — тесе çырнă Украина рейхскомиссарĕ Эрих Кох,—эпир темиçе çĕр пин рабочие Германие, пурпинчен малтан çар промышленноçĕн предприятийĕсенче ĕçлеме яма пултартăмăр».

Фашистла нимĕç оккупанчĕсем икĕ çул хушшинче совет çыннисене çын шутне хумасăр пĕр тăтăш мăшкăлласа пурăннă; çав вăхăт вăл вырăнлăхпа юхăну вăхăчĕ, пĕр правасăр тата пĕр хӳтĕлехсĕр тăрса юлнă вăхăт пулнă.

Киев хулинчи культурăпа истори пуянлăхĕсене çĕмĕрни, çаратса пĕтерни

Гитлеровецсем, Украина çĕрĕ çине пырса кĕрсен, малтанхи кунсенчен пуçласах шкулсене, аслă шкулсене, музейсене, библиотекăсене, клубсене, театрсене, больницăсене тата ача сачĕсене пĕрин хыççăн теприне пĕтерсе пыма тытăннă.

Киева нимĕçсем пырса кĕриччен унта вăтам тата пуçламĕш шкулсем 150 пулнă. Çав шкулсенчен 77-шĕнче оккупантсем казармăсем тунă, 9-шĕнче складсемпе мастерскойсем тунă, 2-ĕшне çар штабĕсем вырнаçтарнă, 8-шĕпе вите вырăнне усă курнă. Киевран чакса кайнă чухне нимĕç ирсĕрĕсем 140 шкула ишĕлтернĕ.

Нимĕç оккупанчĕсем Киеври библиотекăсенчен 4 миллион кĕнеке ытла илсе кайнă. УССР Наука Академийĕн библиотекинчен кăна Германие 320.000 ытла тĕрлĕрен хаклă тата питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекесем, журналсем, алçырăвĕсем илсе кайнă.

1943 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсем Украина культурин чи авалхи центрĕсенчен пĕрне — Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан государство университетне çунтарса, сирпĕнтерсе янă. Çав университета 1834 çулта Беретти архитекторăн (аслин) проекчĕ тăрăх тунă. Университетăн наукăпа вĕренӳ ĕçĕнче темиçе ĕмĕр хушши усă курса пурăннă калама çук паха культура произведенийĕсем çунса кайнă; нимĕç оккупанчĕсем Киеври ытти аслă шкулсене те—индустри институтне, вăрман хуçалăх институтне, Горький ячĕпе тăракан педагогика институтне тата ытти институтсене те ишĕлтернĕ.

Фашистла ирсĕрсем Киевра Хĕрлĕ Çарăн драма театрĕн çуртне (вăл пин çын вырнаçмалăх пулнă), театр институчĕн тата консерваторин çуртсене çунтарса янă, 2.500 çын вырнаçакан циркăн питĕ лайăх çуртне сирпĕнтерсе янă, çамрăксен М. Горький ячĕпе тăракан театрне пĕтĕм оборудованийĕ мĕнĕпех çунтарса янă, еврейсен театрне пĕтерсе лартнă.

Доктор Винтер, унăн заместителĕ доктор Бенцинг, доктор Розкампф тата художник Клейн ертсе пынипе, фашистла нимĕç оккупанчĕсем музейсене ишсе пĕтернĕ, вĕсенчи экспонатсене пурне те Германие турттарса кайнă.

Гитлеровецсем Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан музее тата истори музейне çаратнă. Вĕсем славян халăхĕсен калама çук паха памятникне —Софийски соборне çаратнă. Çав собортан вĕсем XII-мĕш ĕмĕрте çырнă 14 картинăна, çав шутра Михайловски Златоверхи монастырĕн стенисем çинчи 4 картинăна тата хаклă япаласемпе тĕн япалисене илсе кайнă.

Нимĕç командованийĕ хушнă тăрăх, çар чаçĕсем культурăн чи авалхи памятникне — Киево-Печерски Лаврăна çаратнă, сирпĕнтерсе янă, ишсе пĕтернĕ. Нимĕç жандармĕсем 1941 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче ирхине ирех çав Лаврăри çынсене пурне те кăларса янă та кăнтăрла икĕ сехет тĕлĕнче Успенски собора сирпĕнтерсе янă.

Мирлĕ пуранакан совет граждансене тата тытнăна лекнĕ совет çыннисене йышлăн вĕлерни

Нимĕç пуçкасаканĕсем Киева тытса илсенех унти халăха йышлăн вĕлерме пуçланă. Çынсене асаплантарса, персе, çакса, тата «душегубкăсенче» газпа пăчăхтарса вĕлернĕ. Хулари çынсене урамрах яра-яра тытнă, вĕсене ушкăнăн-ушкăнăн тата пĕчченшерĕн те пере-пере вĕлернĕ. Хулари халăха хăратас тесе, çынсене персе вĕлерни çинчен çакăн пек пĕлтерӳсем кăларса çакнă: «Саботаж тунăшăн паян Киеври 100 çынна персе вĕлернĕ. Çакна пурте астуса тăччăр. Саботаж тунăшăн Киеври кашни çын ответлă пулса тăрать. Киев. 22. X. 1941 çул. Хула коменданчĕ». Е тата çакăн пек пĕлтерӳсем çакнă: «Киевра вут тĕртесси тата саботаж тăвасси ӳссе кайни мана питĕ хаяр мерăсем йышăнма хушать. Çавăнпа паян Киевра пурăнакан 300 çынна персе вĕлернĕ. Малашне вут тĕртнĕшĕн е саботаж тунăшăн кашни хутĕнчех кунтан нумайтарах çынна персе вĕлерĕпĕр. Киев, 1941 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕ. Эбергардт, генерал-майор тата хула коменданчĕ». Фашистсем арçынсемпе хĕрарăмсене, ачасемпе старриксене тата чирлĕ çынсене йышлăн вĕлернĕ. Çапла, акă, 1941 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче психиатрически больницăна эсэсовецсен отрячĕ вăркăнса кĕнĕ, ăна нимĕçсен гарнизон врачĕ Риковский ертсе пынă. Гитлеровецсем чирлĕ çынсене 300 çынна пĕр çурта хăваласа кĕртнĕ те унта вĕсене апатсăр, шывсăр темиçе кун усранă, унтан вара Кирилловски çаçари çырмара персе вĕлернĕ. Чирлисене ыттисене 1942 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче, мартăн 27-мĕшĕнче тата октябрĕн 17-мĕшĕнче вĕлерсе пĕтернĕ.

Вĕлериччен час-часах çынсене тискеррĕн те намăссăррăн асаплантарнă. Архимандрит Валерий çапла каласа кăтартнă: фашистсем чирлĕ тата вăйсăр çынсене хĕнетчĕç, вилес патнех çитеретчĕç, шартлама сивĕре вĕсене сивĕ шыв сапатчĕç, юлашкинчен вара Киево-Печерски Лаврăра вырнаçнă полици тĕрминче персе пăрахатчĕç.

Гитлерла пуçкасакансем 1941 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Мельник урамĕпе Доктеревски урам хĕресленнĕ тĕле темиçе пин совет граждание хăваласа пухнă. Пуханнă çынсене пуçкасаканссем Бабий Яр патне илсе кайнă та вĕсенчен мĕншĕр хаклă япалисене туртса илнĕ, унтан вара хăйсене персе вĕлернĕ. Бабий Яр çывăхĕнче пурăнакан граждансем Н. Ф. Петренко тата Н. Т. Горбачева çапла каласа панă: нимĕçсем кăкăр ĕмекен ачасене çырмана ывăта-ывăта яратчĕç те вĕсене вĕлернĕ тата аманнă ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле чĕррĕллех çĕре варса хуратчĕç. «Чĕрĕ çынсем хускалнипе çĕр сийĕ те хускалатчĕ».

1943 çулта, Киевра нумай тытăнса тăма май çуккине курса, оккупантсем хăйсен преступленийĕсене пытарма тăрăшнă, çавăн пек çынсен виллисене тепĕр хут чавса кăларса, çунтара-çунтара янă. Бабий Ярта вилесене çунтарма Сырецки лагере хупнă çынсене янă. Çав ĕçе СС офицерĕ Топайде, жандармери сотрудникĕ Иоганн Мэркель, Фохт тата СС взвочĕн командирĕ Рэвер ертсе пынă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси Специальнăй Комисси тунă. Унăн председателĕ—Н. С. Хрущев, членĕсем—УССР Наркомпросĕ академик П. Тычина, УССР-ти совет писателĕсен союзĕн секретарĕ академик М. Рыльский, УССР Наука академийĕн биологи наукисен кандидачĕ Д. Марковский, çав комиссин ĕçне медицина эксперчĕсем— Я. И. Пивовонский, Ю. Ю. Крамаренко, А. М. Зюков профессорсем тата суд медицинин эксперчĕ — Н. А. Шепелевский профессор хутшăннă. Унта тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин представителĕ В. Д. Шевцов пулнă. Комисси çакна палăртнă: тулличăр даннăйсем тăрăх, Киевра 195.000 совет граждание асаплантарса, персе тата «душегубкăсенче» пăчăхтарса вĕлернĕ.

Совет гражданĕсем каланă тăрăх, çынсенчен ыйтса çырнă протоколсем тăрăх, свидетельсем каланă тăрăх, специальнăй комиссин материалĕсем тăрăх, суд медицинин экспертизи каланă тăрăх тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин членĕсем—Киевпа Галици митрополичĕ Николай тата академик И. П. Трайнин тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна палăртнă: Киев хулине ишĕлтерес ĕçе, халăха пĕр çын юлмиччен çаратса пухас ĕçе, мирлĕ совет гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ совет çыннисене йышлăн асаплантарас тата вĕлерес ĕçе Германин правительствипе верховнăй командованийĕ кăтартса панă тăрăх çаксем туса тăнă: Украина рейхскомиссарĕ Эрих Кох, рейхскомиссарăн заместителĕ фон Ведельштедт, «юг» армейски группăн главнокомандующийĕ генерал-фельдмаршал фон Манштейн, авиаци генералĕ Китцингер, СС çарĕсен генерал-лейтенанчĕ Ютнер, Киев генеральнăй облаçĕн генерал-комиссарĕ Магуния, СС руководителĕ тата полицейфюрер Гальтерман, йĕрке полицейĕн генералĕ Шеер, оберштурмбаннфюрер Эрлингер, СА бригаденфюрерĕ Квитцрау, Киев хулин коменданчĕсем—генерал-майор Эбергардт тата генерал-майор фон-Ремер, генерал-майор Виров, СС бригадин начальникĕ генерал-майор Летлер тата гитлеровецсен оккупаци влаçĕсен ытти офицерĕсемпе сотрудникĕсем; вĕсен хушамачĕсене Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин пĕлтерĕвĕнче кăтартнă.

Совет халăхĕ умĕнче çав тери тискер ĕçсем тунăшăн çав çынсем пурте çирĕп ответ тытмалла.

Ответсăрлăх

ОКТЯБРЬСКОЕ. Лашасене пăхса усрасси тата вĕсен йышне ӳстерессипысăк та ответлă ĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çак тĕлĕшпе татăклă кăтартса панă. Анчах Вăрманкассинчи «Культура» колхоз руководителĕсем партипе правительствăн çав кăтартăвĕсене уссăнах пăсаççĕ. Чуптарма юрăхлă 25 кĕсререн 7 кĕсре кăна чуптарса хăварнă. Пĕтĕ кĕсресем колхозра сахал пулин те, вĕсене кирлĕ пек пăхмаççĕ, ытти лашасемпе пĕрлех аякри çулсене, йывăр ĕçсене кӳлеççĕ. Çавна пула «Узик» ятлă кĕсре Шупашкара кайса килнĕ хыççăн хăм пăрахрĕ. Обезличкăна пула «Роза», «Черемуха» ятлă кĕсресем те хăм пăрахрĕç. Вара колхозри 7 пĕтĕ кĕсререн 4 кĕсре çеç юлчĕ.

Анчах колхозра çакăншăн айăплă çынсене халь те ответ тыттарман-ха. Колхоз председателĕ А. Николаева вĕсене хăй хӳтĕлесе пырать, мĕншĕн тесен «Узик» кĕсрене унăн хăйĕн тăванĕ хăм пăрахтарнă. А. Николаева лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерессишĕн те тăрăшмасть.

И. АНДРЕЕВ

Ялхуçалăх артелĕн уставне пăсаççĕ

Елчĕк районĕнчи «Красный часовой» колхоз членĕ Я. Кузнецов юлташ тимĕрçĕ пулса ĕçлет. Анчах та вăл ĕçкунĕ тăрăх илекен тырăпа канăçмасть. Колхозра урăх тимĕрçĕ çуккипе усă курса, ытти колхозсене кайсах хăратать. Çавна май вăл иртнĕ çул договор тăрăх кашни уйăхрах 12 пăт тырă, 90 ĕçкунĕ, 150 кĕлте, пĕр килограмм пыл илсе тăнă.

Вăрçă йывăрлăхĕпе усă курса, Кузнецов кӳршĕри «Красный воин» колхозра та çав условисемпех ĕçлет. Паллах, Кузнецовăн çак киревсĕр ĕçне колхоз председателĕ П. Максимов тата район... пайĕнче ĕçлекенсем те пĕлеççĕ. Анчах та кунта ялхуçалăх артелĕн уставне тăтăшах пăсаççĕ. Кузнецовăн юрăхсăр ĕçĕ колхозниксене кӳрентерет.

Н. САМАРКИНА.

Ют çĕршывсенче

Канадăри хаçатсем Хĕрлĕ Çар çинчен

ОТТАВА, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Стар» ятлă хаçат (Торонто) хăйĕн умстатьинче Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи икĕ çул çурă хушшинчи ĕçсе çинчен çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн малалла куçса пынин тĕп сăлтавĕ Хĕрлĕ Çар салтакĕсем лайăх пурăннинчен, ытти çынсемпе пĕртан праваллă пулнинчен тата хут вĕреннипе усă курнинчен килет. Çак енсем ăна ĕçе тата оборонăна пулăшма тата культурăллă пурнăça вĕрентнĕ».

«Стар» хаçатăн çар обозревателĕ Плюмеч çапла çырать: Хĕрлĕ Çара пурте цивилизацие гитлерла тираппрен çăлса хăваракан тесе шутлаççĕ, тет.

Монреальри «Стар» ятлă хаçат çапла çырать: «Ленинпа Сталинăн ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене туса йĕркелемелли чаплă планĕсем совет çарĕпе халăхĕ пĕр-пĕрипе тачччăн çыхăнса тăнинчен тухса тăраççĕ. Чи лайăх хĕçпăшаллă техника пĕтĕм тĕнчери вăрçă эксперчĕсене тĕлĕнтерчĕ». Статьяра хальхи вăрçăн кăткăс искусствине лайăх пĕлекен штаб офицерĕсен çав тери паха ĕçне палăртса хăварнă. Хаçат çавăн пекех Хĕрлĕ Çарти çынсен шухăш-кăмăлне те пысăк хак парать.

„Таймс“ Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсем çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсем пирки хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Совет çарĕсем Кривой Рог хулине Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă вăхăтра туртса илни Совет Союзĕн вăрçинчи çĕнĕ саманана пĕлтерет. Ку ĕнтĕ Германин 1941 çулхи стратегиллĕ планĕ пĕтĕмпех путланса ларнине пĕлтерет. Гитлер хăйĕн вăйлă кӳршине ултавлăн пырса тапăннă чухне ССР Союзĕн пуянлăхĕсене çăмăллăнах туртса илме ĕмĕтленнĕ. Çак ĕмĕте вăл Британи утравĕсем çине çĕмĕрсе кĕме тепĕр хут хăтланса пăхиччен пурнăçласшăн пулнă. Ăна виçĕ тĕрлĕ чĕртавар питĕ кирлĕ пулнă: тырă, нефть тата хурçă туса кăларма кирлĕ япаласем. Анчах унăн нефтĕн нихăçан пĕтми çăлкуçĕ патне пырас ĕмĕчĕ путланса ларчĕ.

Вăл Украинăн тырпул туса илмелли пуян çĕрĕсене тытса илчĕ пулин те, çав çĕрсемпе савăнаймарĕ, çав районсенче тырпул пухса илсе, хăйĕн çарне Германирен тырпул турттарса килмесĕр тăрантарса усрама пултараймарĕ. Çапах та вăл Днепр шывĕн анат тăрăхĕнчи районри минераллă пуянлăхсемпе кăштах усă курма пултарчĕ. Вăл Кривой Рог районĕнчи тимĕр рудин пысăк запасĕсемпе тата Никополь районĕнчи марганец кăларакан вырăнсемпе усă курчĕ. Халĕ ĕнтĕ çав çăлкуçĕсене унран иккĕшне те туртса илнĕ».

«Эпир,—тет малалла хаçат,—хамăр вăхăтри калама çук вăйлă çарату похочĕ пĕтсе ларни мĕнле пулнине курса тăратпăр. Халь ĕнтĕ хăй тытса илнĕ юлашки пуянлăхне çухатнă вăрă-хурах хăйне мĕнле çăлса хăварасси çинчен шухăшлать».

Хаçат çапла хушса çырать: «Пывăр условисенче çав тери нумай вăй хурса кĕрешме тивнине уйăхран уйăха чăтса тăпи тата совет çарĕсен çапăçури иксĕлми вăй-хăвачĕ хĕвелтухăçĕнчи вăрçă искусствинче тĕлĕнмелле япала пулса тăрать».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: ĕнер союзниксем тăшманăн Анцио районĕнчи артиллери позицийĕсене пенĕ. Ку ĕçе пĕр Америка крейсерĕ те хутшăннă. Ĕнерхи кунах Англи эсминецĕсем Адриатика тинĕсĕнчи Корчула утравĕ хĕрринчи Бечалута портне пенĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕнче Анцио фронтĕнче кĕрешекен акăлчансен чаçĕсем тăшманăн икĕ тĕреклетнĕ пунктне атакăласа туртса илнĕ.

Авиаци тăшманăн Рим çывăхĕнчи аэродромĕсене атакăланă, тăшманăн Шибеник районĕнчи (Югослави) суднисене тата тăшманăн вăтам Италири транспортне çĕмĕрнĕ.

Итали патриочĕсем гитлерла оккупантсене пурнăç памаççĕ

СТАМБУЛ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Итали патриочĕсем Италин гитлерла оккупантсем йышăннă районĕсенче нимĕç захватчикĕсемпе вĕсен Италири фашистла хӳрешкисемшĕн калама çук йывăр пурнăç туса хунă.

Италири фашистла хаçатсем кашни кун гитлерла сутăнчăксене халăх пригоровĕ тăрăх вĕлерни çинчен пĕлтереççĕ. Январь уйăхĕн вĕçĕнче Болоньяра фашистсен вырăнти организацийĕн руководителне Факинпе вĕлернĕ.

Чезена хулинчи патриотсем фашистла партин çуртĕ айне нумай вăхăт иртсен тин çурăлакан бомба хунă. Çав çурт вара сирпĕнсе кайса ишĕлсе аннă. Ишĕлчĕксем айĕнче нумай фашист вилнĕ.

Итали партизанĕсем пысăк активлăх кăтартаççĕ. Нумаях пулмасть партизансен отрячĕ Премоззелори (Новара провинцийĕ) чернорубашечниксем вырнаçнă казармăсене тапăннă. Çапăçу пĕр талăка пынă. Партизансем 100 фашиста ытла пĕтерсе тăкнă, çапăçу пынă вырăна нимĕçсен пысăк чаçĕ пырсан тин каялла чакнă.

Нумаях пулмасть партизансен пысăк отрячĕсем Лигури альпинче пысăк операцисем тунă.

Итали патриочесем оккупантсемпе Муссолини влаçĕсем паракан хушусене пурнăçламаççĕ. «Корьере делла сера» ятлă фашистла хаçат Миланри çар хатĕрĕсем тăвакан завод, рабочисем ĕçрен пăрăннине пула, «вăхăтран вăхăта кăна ĕçлет», тесе çырать.

Ĕçе яма мобилизацилессинчен те халăх пур майсемпе те пăрăнать. Итальянецсем ĕçе мобилизацилессинчен йышлăн пăрăннине пула, влаçсем хăйсене пулăшма полицине чĕннĕ, полици çынсене хупăрла-хупăрла илет.

КĔСКЕН

● Мексико хулинче (Мексика) вырăс музыкин концерчĕ пулса иртнĕ. Концерта темĕн чухлĕ халăх пынă. Питĕ юратса, хавасланса итленĕ. Чайковский, Шостакович тата Мясковский произведенийĕсене халăх пуринчен те ытларах кăмăлласа итленĕ.

● Францири партизансем нумаях пулмасть Клермон-Ферран хулинчи префекта вĕлернĕ.

● Сальвадор парламенчĕ фашистла çĕршывсен гражданĕсен харпăрлăхне туртса илесси çинчен калакан закона йышăннă.

Францири патриочĕсем гитлерла оккупантсемпе кĕрешеççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Франци чиккинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Тури Савойăри партизансене хирĕç кĕрешекен оккупациллĕ влаçсемпе Дарлан отрячĕсен ĕçĕсем ăнăçмаççĕ. Вĕсен экспедицийĕнче 1.500 нимĕç салтакĕ тата Виши «правительствин» 20.000 жандармĕ пур. Вĕсем партизансемпе виçĕ эрне хушши ăнăçсăр çапăçнă хыççăн сăртсем патĕнче оборонăллă позици йышăннă. Гитлеровецсем 400 çынна яхăн çухатнă. Вĕсенчен нумайĕшне çав вырăнти ялсенчи халăхсем вĕлернĕ.

Англипе Турци хушшинчи ĕçсем

АНКАРА, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Авторитетлă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Турцин «Трапезунд» ятлă пăрахучĕ Турци валли çар япалисем турттарса пынă. Çав пăрахута Англи влаçĕсем Египетри пĕр портра чарнă та пăрахут çинчи çар япалисене йăлтах пушаттарнă.

Турцире Германи пропаганди вăйланни

КАИР, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Вырăнти журналистсем çакна асăрхаттараççĕ: юлашки вăхăтра Германин паллă пропагандисчĕсем Турцие час-часах çӳре пуçланă. Фактсем çакна кăтартса параççĕ: Турцин официальнăй çыннисем Германин пропагандисчĕсене Турцире хăйсен ĕçне вăйлатма пулăшаççĕ

Пĕлтерӳ

Мартăн 3-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми: «**Мартăн 8-мĕшĕ— Пĕтĕм Тĕнчери Хĕрарăмсен Коммунистла Кунĕ**».

Докладчик — ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **М. Я. Буркова** юлташ

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕн прокуратурине бухгалтер тата ялан ĕçleме ревизор кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, ком. 39. Тел. 7—67.
2—1.

Атăл лешьенчи торф предприятийĕ организацисене хутмалли тункатасем сутать. Илекенсен вĕсене 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен турттарса каймалла. Пĕр кубометр хакĕ—5 тенкĕ те 20 пус.
Торф предприятийĕ.

Чăваш коопинсоюза ялан ĕçлеме техник-строитель, ĕçпе ĕçукçи экономисчĕ, бухгалтер-ревизор, экономист-плановик кирлĕ.
Адрес: г. Чебоксары, Красная площадь 9, Чувашкоопинсоюз.
3—1.

Чебторгăн Шупашкарти Хĕрлĕ площадьри 6-мĕш номер магазинне тимĕр тыттарнă лайăх çунасем килнĕ. Çунасене çийĕнчех укçа тӳлеттерсе те, укçапа учреждени урлă куçарттарса та сутаççĕ.
Чебторг. 2—1.

Виçĕ çулхи хăйăр сухалвă, тĕсĕ—çурен, çамки çинче шурă пăнчă пур. Тупни е курни çинчен çак адреспа пĕлтерме ыйтаççĕ: Сĕнтĕр районĕ, Ильинка ялсоветĕнчи „Краснофлотец" колхозăн правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, секретарьпе заместителсен — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00569 Типография №1, Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л. Тираж 14.100 экз